# ЧĔРĔ ПУРНĂÇ ТАППИ

«Ăна тивĕçлипех «Чăваш халăх художникĕ» хисеплĕ ят панă», – терĕç ун пирки уявра. Кам пирки, ăçта тетĕр-и? Сăмахăм – халăхран тухнă, унăн шăпине сăнарсенче туллин уйăланă В.И.Агеев пирки. Çак кунсенче вăл Чăваш патшалăх ӳнер музейĕнче хăйĕн 70 çулхи юбилейне паллă турĕ. Кунтах унăн тĕрлĕ темăпа ӳкерне ĕçĕсен куравĕ уçăлчĕ.

Владимир Ивановича менелникпе сумлă ӳнерçĕ-ĕçтешĕсем çеç мар, тусĕсем те, ентешĕсем те, унăн искусствине килĕштерекенсем те саламларĕç. Малашне çĕнĕрен-çĕнĕ произведенисем калăплама ăнăçу сунчĕç. «Çĕр çинче тĕрлĕ енлĕ професси нумай. Турă панă пултарулăха тĕпе хурса ĕçлекен те чылай. Вĕсенчен пĕри – Владимир Агеев», – терĕ Чăваш Республикин культурăпа национальноçсен ĕçĕсен министрĕн çумĕ В.С.Бондарев. Пĕтĕм тĕнчери халăхсен историне, культурине, искусствине çине тăрса тĕпченипе пĕрлех, вăл тăван халăхăн пысăк пулăмлă аваллăхне, ку чухнехи пурнăçа «шĕкĕлченĕ», ăна халиччен курман-шухăшламан енчен илсе сăнара куçарнă, ун çинчен çĕнĕлле, чăн пулнине тĕпрен илсе шухăшлама-хаклама вĕрентнĕ пирки те палăртса каларĕ Виктор Сергеевич. Çапла, Владимир Иванович живописçпе графикăра историпе фольклор темисене çутатма тăрăшать.

Илемлĕ литературăна юратакансем, паллах, Агеев кĕнеке графикипе ĕçленине те пĕлеççĕ. Паллă ӳнерçĕ С.Элкерĕн «Çамрăк хунав», И.Яковлевăн «Ача-пăча калавĕсем», Е.Афанасьевăн «Пирĕн интернат», А.Тимбайăн «Вун икĕ асамçă» тата вун-вун кĕнеке илемлетнĕ.

В.И.Агеев – нумай енлĕ пултарулăхра палăрнă художник. Вăл живописçпе, графикăпа, монумент искусствипе ĕçлет. Европа искусствинчи илемлĕх йăли-йĕркине алла илнипе пĕрлех чăвашсен ĕмĕрсем хушши аталаннă сăнарлăх майĕсене, ал ĕçĕсен хитрелĕхне чуна йышăннă, вĕсене чĕртес, çĕнĕ самана сывлăшне кĕртсе маларла аталантарас тĕлĕшпе нумай тăрăшнă.

XX ĕмĕрте искусство тĕнчинче Агеев стилĕ палăрса юлчĕ пулсан XXI ĕмĕрте вара унăн вĕренекенĕсем çитĕнӳ тăвасса шанас килет. В.Агеев ĕçĕсенче – чĕрĕ пурнăç таппи. Унăн экспозицийĕпе паллашас текенсене Ӳнер музейĕ хапăл туса йышăнать.

**Ольга СЕМЕНОВА.**